# Сказка Как бедняк Григорий без лошади остался



Пĕр ялта Кĕркури ятлă чухăн хресчен пурăннă. Ун лаши пулман. Хăй вăл питĕ Турра ĕненекенскер пулнă та Турă ăна мĕнле те пулин айăпа кĕнĕшĕн лашасăр хăварчĕ пулĕ тесе шухăшланă.

Пĕрре вăл хăйĕн кӳршинчен вунă кĕрепенкке сĕлĕ кивçен илет те Микул турра çырлахтарма Ишеке чиркĕве кайма тухать. Çынни пит инçетрискер пулнă та çулне те лайăхах пĕлмен. Унăн çул çинче виçĕ-тăват ялта та çĕр выртма тивнĕ.

Акă, пырать хайхискер çулпала. Пырать-пырать те, пĕр яла çитсен каç пулать. Ку пĕр çын патне хваттере кĕрет.

— Çак сĕлле ăçта хурас-ши? — тесе ыйтать хваттер хуçисенчен.

— Çавăнта, сарайне кайса хур, — теççĕ хуçисем.

Хайхи сĕллине илчĕ те сарайне кайса хучĕ. Унта чăхсем пулнă-мĕн. Сĕлле ирччен пĕтĕмпех çисе яраççĕ. Кĕркури ирхине тăрать те:

— Хай сĕлле илсе парăр-ха, — тет.

— Чăхсем çисе янă, — теççĕ хуçисем.

— Сĕллӳне паратни, чăххуна паратни? — теме пуçларĕ Кĕркури.

— Чăххинех парас пуль, — тет хуçи.

Кĕркури чăхха йăтать те малалла уттарать.

Кайсан-кайсан Кĕркури каллех хваттере кĕрет.

— Çак чăхха ăçта хурас-ши? — тесе ыйтать хваттер хуçисенчен.

— Ав çавăнта, кăркка картине, кайса яр, — теççĕ хуçисем.

Кĕркури чăхха картана кайса ярать те, кăрккисем ăна ирччен сăхса вĕлереççĕ.

— Чăхха илсе килсе парăр-ха, — тет ирхине Кĕркури.

— Ăна кăрккасем сăхса вĕлернĕ, — теççĕ хуçисем.

— Кăрккине паратни, чăххине паратни? — тет Кĕркури.

— Кăрккинех парас пуль, — тет хуçи.

Кĕркури кăрккана йăтать те малалла утать. Кайсан-кайсан каллех каç пулать. Кĕркури пĕр яла çитет те каллех хваттере кĕрет.

— Çак кăрккана ăçта ярас-ши ман? — тесе ыйтать хваттер хуçинчен.

— Ав, çавăнта, качакасен картине, кайса яр, — тет хуçи.

Кĕркури кăрккине качакасемпе пĕрле кайса хупать те, качакисем ăна ирччен тĕксе вĕлереççĕ.

— Хай кăрккана илсе килсе парăр-ха, — тет ирхине Кĕркури.

— Ăна качакасем тĕксе вĕлернĕ, — тет хуçи.

— Апла пулсан пар пĕр качакине, — тет Кĕркури.

Кĕркури качакана çавăтрĕ те малалла утрĕ. Кайсан-кайсан каç пулчĕ те, Кĕркури каллех хваттере кĕчĕ.

— Ман çак качакана ăçта ярас-ши? — тесе ыйтать хуçинчен.

— Ав çавăнта, пăрусемпе пĕрле кайса хуп, — теççĕ лешĕсем.

Кĕркури качакине пăрусемпе пĕрле кайса хупать. Ирхине тăрать те хуçисенчен:

— Мана качакана илсе тухса парăр-ха, — тесе ыйтать.

— Ăна пăрусем тĕксе вĕлернĕ, — теççĕ лешĕсем.

— Апла пулсан парăр пĕр пăрăвне, — тет Кĕркури.

Ăна пĕр пăру çавăтса тухса пачĕç те, ку татах малалла утрĕ.

Кайсан-кайсан каллех каç пулса кайрĕ те, Кĕркури пĕр яла çитсе хваттере кĕчĕ.

— Ман çак пăрăва ăçта ярас-ши? — тесе ыйтать хваттер хуçисенчен.

— Ав çавăнта, ула кĕсрепе пĕрле кайса хуп, — теççĕ лешĕсем.

Кĕркури пăрушне кĕсрепе пĕрле кайса хупрĕ. Ирхине тăчĕ те хуçисенчен:

— Мана пăрăва илсе тухса парăр-ха, — тет.

— Ăна ула кĕсре тапса вĕлернĕ, — теççĕ хуçисем.

— Апла пулсан ула кĕсрĕр манăн! — тет Кĕркури.

Хуçисем кăна парасшăнах мар, анчах Кĕркури вĕсене йăлăхтарсах çитерчĕ. Унтан вара лешĕсем аптранипе кĕсрене пĕтĕм хатĕрĕпех кӳлсе парса ячĕç. Юрра янăраттарса кăна пырать Кĕркури.

Сĕлĕрен чăхă,

Чăхăран кăркка,

Кăрккаран качака,

Качакаран пăру,

Пăруран кĕсре! —

тесе юрлать.

Сикрĕ тухрĕ кун умне пĕр Тилĕ.

— Ах, мучи, санăн юрру лайăх-çке. Татах юрласа кăтарт-ха, — тет.

Кĕркури тиллине хăйпе юнашар лартрĕ те татах юрлать:

Сĕлĕрен чăхă,

Чăхăран кăркка,

Кăрккаран качака,

Качакаран пăру,

Пăруран кĕсре.

Юрланă май хăй кĕсрине пушшипе шарт çапать.

Сикрĕ тухрĕ вăрмантан пĕр Кашкăр.

— Ах, мучи, санăн юрру лайăх-çке. Татах юрласа кăтарт-ха, — тет.

Кĕркури Кашкăра та хăйпе пĕрле лартать те юрласа пырать:

Сĕлĕрен чăхă,

Чăхăран кăркка,

Кăрккаран качака,

Качакаран пăру,

Пăруран кĕсре.

Юрланă май хăй ула кĕсрине татах шарт çапать.

Сикрӗ тухрӗ вӑрмантан пӗр ҫӑмламас Упа. Сикрӗ тухрӗ те урапа ҫине хӑпарса ларчӗ. Упа хӑпарса ларсанах урапа турти хуҫӑлчӗ кайрӗ. Кӗркури калать:

— Ну эсир ман урапан туртине хуҫрӑр, вӑрмана кайса касса тухӑр, — тет.

Упа, Кашкӑр, Тилӗ вӑрмана кӗрсе кайрӗҫ те пуш аври пек йывӑҫ касса тухрӗҫ. Кӗркури калать:

— Кунашкалли мар, пысӑкки кирлӗ, — тет.

— Эпир тупаймарӑмӑр, — теҫҫӗ лешӗсем.

Турталӑх йывӑҫ шырама Кӗркури хӑй кӗрсе кайрӗ. Кӗркури кайсанах лешсем кӗсрене туртса антараҫҫӗ те ҫисе тӗшӗрсе яраҫҫӗ. Тирне хӑвараҫҫӗ те улӑм тултарса каллех кӳлсе тӑратаҫҫӗ. Кӗркури турта касса тухса хурать те, урапи ҫине хӑпарса ларса татах малтанхи юррах юрлать:

Сӗлӗрен чӑхӑ,

Чӑхӑран кӑркка,

Кӑрккаран качака,

Качакаран пӑру,

Пӑруран кӗсре.

Юрланӑ май хӑй ула кӗсрине шарт! тутарса тивертет. Анчах кӗсри вырӑнтан та тапранмасть. Шарт! тутарать Кӗркури кӗсрине тепӗр хут. Кӗсри тӳнк! кайса ӳкет. Чӗр чунӗсем вӑрманалла тарнӑ.

Мӗн тӑвас? Нимӗн тума та ҫук. Кӗркури урапи ҫинчен анчӗ те малалла урапине хӑех туртса Ишекелле утрӗ. «Урапи пулсан, лашине те Турӑ парӗ», — тесе лӑплантарчӗ хӑйне.

Мультимедийная онлайн-библиотека
“Сказки Поволжья”

Иллюстрированые и озвученные сказки народов Поволжья.